Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

43 (8004) № * Шăмат кун, 2012 ҫулхи ҫĕртме (июнь) уйăхĕн 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## «Мĕн палăртнине пурнăҫламаллах», – аса илтерчĕ Иван Моторин районта пулнă май



**Ĕҫлĕ ҫул ҫӳрев**

Ĕнер района Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ И. Моторин килсе кайрĕ. Чи малтанах ĕҫлĕ делегаци Мăн Сĕнтĕрти информацие культура центрĕнче пулчĕ. Ҫакăнта тата лицейра ҫитес вăхăтра хăш-пĕр хушма улшăну кĕртме палăртнă ĕҫ-хĕлпе район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев тĕплĕн паллаштарчĕ, республика представителĕ хăйĕн шухăшне палăртрĕ **(сăн ӳкерчĕкре).**

Каярах делегаци Москакасси ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаҫнă полигона ҫитсе курчĕ. Эпир ҫитнĕ самантра кунта хĕрӳ ĕҫ пыратчĕ, хытă каяша тракторсем таптаса хытаратчĕҫ.

– Иртнĕ ҫул кунта вун пĕр пин кубла метр хытă каяш турттарнă. Нумай хваттерлĕ ҫуртсенчен тасамарлăха илсе тухасси йĕркеленнĕ ĕнтĕ, ялсемпе ĕҫлесси вара хальлĕхе йывăртарах-ха, – терĕ район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ, капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳҫи В. Никитин ҫитес вăхăтра яллă вырăнсемпе те тачăрах ĕҫлеме шантарса.

И. Моторин Муркашри сĕт-ҫу заводне те ҫитсе курма кăмăл турĕ. Кунта вăй хуракансем пухнă сĕтрен тĕрлĕ юр-вар хатĕрлессипе тимлетчĕҫ. Делегацие ҫитес вăхăтри тĕллевсене, завод мĕн чухлĕ продукци туса илнине кунти ĕҫе йĕркелекен О. Дельман каласа кăтартрĕ. Вăл палăртнă тăрăх кунта ҫитес вăхăтра хушма строительство ĕҫне пуҫламалла. Ҫакăнта вăрах пулнă хыҫҫăн ҫул ҫӳрев малалла тăсăлчĕ.

Ҫапах та пысăк малашлăх шантаракан объект вăл "Путь Ильича" агрофирмăн сĕт-ҫу комплексĕ шутланать. Кунта халĕ строительство ĕҫĕсем пыраҫҫĕ, вылăх тăмалли пӳлĕмсен оборудованине йĕркелеҫҫĕ, ытти ĕҫсене пурнăҫлаҫҫĕ.

– Эсир ҫак ĕҫе ăнăҫлă вĕҫлессе, хăвăр ĕмĕте тулли вăя кĕртессе шанас килет. Ҫĕнĕ объект валли уйăрнă патшалăх пулăшăвĕ тата хăвăр тăрăшулăх пысăк пахалăхлă ял хуҫалăх продукцийне туса илессинче питĕ пысăк вырăн йышăнмалла. Паянхи ĕҫлĕ ҫул ҫӳрев вара ячĕшĕн кăна пулмĕ, мĕн палăртнине пирĕн пĕрле пурнăҫлама тăрăшмаллах, – кăмăллăн палăртрĕ Иван Борисович хăй шухăшне.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Раҫҫейре**

## Тӳлевсĕр ҫĕр те, хваттер те

Раҫҫей Президенчĕ Владимир Путин кĕҫнерни кун «О внесении изменения в статью 56 Жилищного кодекса Российской Федерации» саккуна алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн виҫĕ е ытларах ачаллă ҫемьесем ҫурт лартма тӳлевсĕр ҫĕр илсен те муниципаллă фондран хваттерпе тивĕҫтермелли правăна ҫухатмаҫҫĕ.

Халиччен нумай ачаллă ҫемьесене тӳлевсĕр ҫĕр парсан хваттер илмелли черетрен кăларнă. Президент алă пуснă саккун ҫак правилăна пăрахăҫлать.

Ҫĕнĕ саккун нумай ачаллă ҫемьесене хӳтĕлеме тата вĕсен пурнăҫ шайне лайăхлатма май памалла. Ҫапла вара нумай ачаллă ҫемьесем тӳлевсĕр ҫĕре те, хваттере те тивĕҫме пултараҫҫĕ.

Саккун нормисем 2011 ҫулхи июнĕн 17-мĕшĕнчен вăйра.

**«Симĕс ĕҫ ҫи» – 2012**

## Курăк ҫулма пуҫларĕҫ

«Симĕс ĕҫ ҫи» кунсерен вăй илсех пырать. Ҫур аки ăнăҫлă ирттернĕ ҫĕр ĕҫченĕ паян хăйĕн тĕп тĕллевне вылăх апачĕ хатĕрлессипе ҫыхăнтарать. Ĕнерхи кун тĕлне уяр кунсемпе туллин усă курса районти 5 пĕрлешӳллĕ хуҫалăх «симĕс ĕҫ ҫине» тухнă. Ку ĕҫе пуринчен малтан Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирма кӳлĕннĕ. Ҫĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне асăннă хуҫалăхсем нумай ҫул ӳсекен курăксене 365 гектар ҫулнă пулсан, талăк хушшинче ҫак кăтарту 80 гектар ӳснĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Статистика**

## Кашни ҫиччĕмĕшĕн – автомобиль

2011 ҫул вĕҫленнĕ тĕле Чăваш Республикинче уйрăм ҫынсен хапăрлăхĕнче 216 пин автомобиль шутланнă. Ку хисеп ҫулталăк каяллахинчен 7 процент пысăкрах. Юлашки 5 ҫул хушшинче вара граждансен харпăрлăхĕнчи автомашинăсен шучĕ 1,4 хут ӳснĕ. Пĕтĕм шутран ытларахăшĕ ҫăмăл автомашинăсем (86 процент). Груз турттармалли автомашинăсем 12 процент тата 2 процент автобуссем.

Шупашкар хулинче пурăнакансен харпăрлăхĕнчи автомашинăсен шучĕ 76,9 пин, Ҫĕнĕ Шупашкарта – 21,9 пин, Шупашкар районĕнче – 11,6 пин, Улатăрпа Улатăр районĕнче – 10,7 пин, Ҫĕмĕрлепе Ҫĕмĕрле районĕнче – 8,8 пин, Патăрьел районĕнче – 8,3 пин. Кунпа пĕрлех Шупашкарта автобуссемпе ҫăмăл автомашинăсен, ятарлă автомашинăсен 37 проценчĕ, груз турттармалли автомашинăсен, пикапсен, фургонлă ҫăмăл автомашинăсен тата ятарлă автомашинăсен 25 проценчĕ шутланать.

2011 ҫул вĕҫленнĕ тĕле ҫăмăл автомашинăсен шучĕ 1000 ҫын пуҫне 150 единица чухлĕ пулнă (2010 ҫулта – 139). Тепĕр майлă каласан вăтамран республикăра пурăнакан кашни ҫиччĕмĕш ҫыннăн харпăрлăхĕнче ҫăмăл автомашина пур. 5 ҫул каялла харпăрлăхра ҫăмăл автомашина кашни вуннăмĕш ҫыннăн пулнă.

**Э. МАКСИМОВА,**
**Чăвашстат ертӳҫи.**

**Ача амăшĕн капиталĕ**

## 1,1 пин ҫемьен сертификат

Шăпах ҫавăн чухлĕ ҫемье пирĕн районта 2007 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса «Ачаллă ҫемьесене патшалăх пулăшăвĕ парассин хушма мерисем ҫинчен» саккун вăя кĕнĕренпе ача амăшĕн (ҫемье) капиталĕн сертификачĕсене илме пултарнă. Чăваш Республикинче кун пек ҫемьесем 36 пин ытла. Сертификат сумми малтан 250 пин тенкĕпе танлашнă пулсан, халĕ вăл – 387 пин тенкĕ.

Сертификата тивĕҫнĕ ҫемьесенчен ҫуррине яхăн унпа пĕтĕмпех е пĕр пайĕпе усă курнă та ĕнтĕ. Усă курнă пĕтĕмĕшле сумма районĕпе 138 миллион ытла тенкĕпе, республикипе 5 миллиард ытла тенкĕпе танлашать.

Ача амăшĕн капиталĕпе ытларахăшĕ хăйсен ҫурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма усă курать. Паянхи куна ача амăшĕн капиталĕпе усă курса районĕпе 331 ҫемье (республикипе 13,7 пин ҫемье) хăйсен ҫурт-йĕр кредичĕсене пĕтĕмпех е пĕр пайне тӳлесе татнă, 56 ҫемье (республикипе 917) строительство организацине хутшăнтармасăр ҫурт-йĕр тунă е реконструкциленĕ, 51 ҫемье (1415) ҫутуилӳ килĕшĕвĕпе пурăнмалли ҫурт-йĕр туяннă, 5 ҫемье (99) ҫурт-йĕр тума пая кĕнĕ, 7 ҫемье (287) тунă е реконструкциленĕ ҫурт-йĕршĕн компенсаци илнĕ.

Ачисене вĕрентме, студентсен общежитийĕнче пурăнма, ача сачĕшĕн тӳлеме ача амăшĕн капиталĕпе усă курнисем районĕпе 9, республикипе 254 ҫемье.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуҫлăхĕ.**

**Йыхрав**

## Пĕрле савăнар-и Акатуйра?

Йăлана кĕнĕ тăрăх ҫурхи уй-хир ĕҫĕсене вĕҫленĕ май районта иртерекен Акатуй уявĕ ыран Муркашра пулать. 59-мĕш хут иртерекен юрă, ĕҫ тата спорт уявĕн программи пуян. Уявра ĕҫ паттăрĕсене, ĕҫ династийĕсене чыслĕҫ, нумай ачаллă ҫемьесене ҫĕр участокĕ тӳлевсĕр илме свидетельствăсем, ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене парĕҫ. Халăх пултарулăх маҫтăрĕсен ĕҫĕсен, сăн ӳкерчĕксен выставкисем иртĕҫ, карусельсемпе аттракционсем пулĕҫ. Спортра тусăлсем вара хăйсене тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсенче тĕрĕслĕҫ. Кунĕпех юрă-кĕвĕ янăрĕ, суту-илӳ предприятийĕсем хăйсен продукцийĕсене сĕнĕҫ. Пĕр сăмахпа – никама та кичем пулмĕ уявра. Апла пулсан пĕрле савăнар-и Акатуйра?

### Уявра 3 кун канатпăр

**Раҫҫей кунне эпир июнĕн 12-мĕшĕнче уявлатпăр. Пĕтĕмĕшле кану кунĕсем ҫавна май виҫĕ куна тăсăлаҫҫĕ: июнĕн 10, 11, 12-мĕшĕсем.**

**Июнĕн 12-мĕшĕ – Раҫҫей кунĕ**

## Патшалăх уявĕ – кашнин уявĕ

Раҫҫей кунне 2002 ҫулчен Раҫҫей патшалăх суверенитечĕ ҫинчен калакан Декларацие йышăннă кун тесе уявланă. Ку вăл – ҫĕр-шыври чи «ҫамрăк» патшалăх уявĕсенчен пĕри.

2001 ҫулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Раҫҫей патшалăх суверенитечĕ ҫинчен калакан Декларацие йышăннă кун ячĕпе Кремльте иртнĕ йышăнура РФ Президенчĕ В. Путин ҫапла каларĕ: «Ҫак документран пирĕн ҫĕнĕ истори пуҫланчĕ. Гражданла ирĕклĕхсемпе саккун пуҫ пулса тăракан демократиллĕ патшалăх историйĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ вара – граждансен ăнăҫлăхĕ, ҫителĕклĕхĕ тата ырлăх-пурлăхĕ».

1994 ҫулта Раҫҫейăн пĕрремĕш Президенчĕ Борис Ельцин хăйĕн Указĕпе июнĕн 12-мĕшне патшалăх пĕлтерĕшне парать – Раҫҫей патшалăх суверенитечĕ ҫинчен калакан Декларацие йышăннă кун пулса тăрать вăл.

Асăннă документа хăйне вара тăватă ҫул маларах Совет Союзĕ шутĕнче пулнă республикăсем пĕрин хыҫҫăн тепри никама пăхăнманнисем пулса тăнă вăхăтра РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш съездĕнче йышăннă пулнă. Каярахпа ку куна ансатрах Никама пăхăнманлăх кунĕ тенĕ. Сăмах май шăпах июнĕн 12-мĕшĕнче ҫĕр-шыв «никама пăхăнманлăх» илнипе пĕрлех пĕтĕм халăхпа ҫĕр-шывăн пĕрремĕш Президентне суйланă. Борис Николаевич Ельцин – Раҫҫей Федерацийĕн пĕрремĕш Президенчĕ.

Темĕнле пулсан та ҫак кун ун чухне халăхра камшăн мĕнле тенĕ пек пулнă. Ытларахăшĕ унăн пĕлтерĕшĕпе вырăнне ăнлансах та ҫитеймен. Вĕсемшĕн вăл черетлĕ кану кунĕ шутĕнче пулнă. Раҫҫей хулисенче ҫав кун массăллă уяв мероприятийĕсем иртеркеленĕ пулин те, унăн анлăшĕ палăрсах кайман.

Борис Ельцин 1998 ҫулта хăйĕн сăмахĕнче июнĕн 12-мĕшĕ тĕлĕшпе тĕрлĕ сăмах-юмаха чарса лартма тĕв турĕ, ҫак куна Раҫҫей кунĕ тесе паллă тума сĕнчĕ. Официаллă уявăн ҫĕнĕ ячĕ вара 2002 ҫулхи февралĕн 1-мĕшĕнче ҫĕнĕ Ĕҫ кодексĕн положенийĕсем вăя кĕрсен ҫеҫ ҫирĕпленчĕ.

Халĕ Раҫҫей кунĕ – саккунта тĕрĕслĕх ҫинче никĕсленнĕ ирĕклĕх, гражданла мир тата ырă килĕшӳ уявĕ. Ку уяв – халăх пĕрлĕхĕн символĕ, Тăван ҫĕр-шывăн хальхи тата пуласлăхĕшĕн пирĕн шăпишĕн пурте пĕрле ответлă пулнине туйни.

# Вăхăтне епле çитерет-ши?

Асталăх

Хапхана уçрăм та юмах тĕнчине лекнĕн туйăнчĕ. Пĕчĕк кăна кÿлĕре шурă кăвакал ишнине, ун тавра шурă лили чечекĕсем ярăннине асăрхарăм. Шыв хĕрринчи чул çинче вара тепĕр икĕ кайăкĕ канма ларнă пулас. Шапи те ав илемпе киленме шывран пуçне кăларса пăхать, хутран-ситрен хăй кĕввине кăларать. Çатан карта çинчи сарă киккириклĕ автанĕ салтак евĕр сыхă тăрать, йĕри-таврана вичкĕн куçпа тинкерет. Пĕр çуртăн иккĕмĕш хутĕнче Якутирен кÿрсе килнĕ пысăк пăлан пуçĕ мăнаçлăн курăнса ларать, çакăн пек мĕлкесем хуçалăхра вара татах та пур. Куçа илĕртекенни кунта чылай, пурне асăнса та пĕтереймĕн. Ку çăтмах Оринин ял тăрăхне кĕрекен Чамăш ялĕнчи Иван Вершков хуçалăхĕнче вырнаçнă.



«Вăхăтне тата пултарулăхне ăçтан çитеретĕр-ха эсир», – тесе ыйтрăм эпĕ Вера Титовнăран. Вăл питĕ тарават пулнăран унтан Августина мăнукĕ пĕр самантлăх та хăпмарĕ, тăтăш ун тавралла кускаларĕ.

– Кунта чи малтанах илемлĕх патне чун туртăмĕ пулни кирлĕ. Енчен те çын çакăнпа кăсăкланмасть пулсан ăна вăл ăнланмасть. Вăхăтне вара тупма тăрăшатăп. Картишĕнчи кÿлĕне тăвиччен малтан тĕрлĕ чечекпе самай аппаланма тиврĕ, – терĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

Чăнах та пахчара, картишĕнче мĕнле кăна чечек çук-ши? Эпĕ вара хăшне-пĕрне илтмен те, курман та. Картишĕнче ларса каласмалли кĕтес те – хăйне май çăтмах. Килте ăсталанă шурă хурăн турачĕсем шурă пĕчĕк витрери чечексемпе тулнă.

Чĕрĕ чечексен илемне Вера Титовна пусма çине куçарса тĕрлĕ мелпе тĕрлеме те ăста.

– Акă Троица уявĕ тĕлне симĕс пусма çине тĕрлесе чиркÿ валли алшăллисем парнелерĕм. Санаторие канма кайсан та алă ĕçĕсĕр лармастăп, – терĕ вăл хăй ăсталанă ĕçĕсемпе паллаштарнă май.

Ку çеç те мар, чăваш халăх тумĕ çĕлеме те ăста вăл. Акă сенкер тĕслĕ саппун хатĕрччĕ те ĕнтĕ, юнашарах ав хĕрлĕ тĕсли те пур. Ăна мăнукĕсем тĕрлĕ юмах, концерт лартнă чухне хаваспах тăхăнаççĕ. Çавăн пекех хăй ĕçлекен шкул валли пĕр костюм хатĕрленĕччĕ.

– Халăх йăли-йĕрки аслисенчен кĕçĕннисене куçса пытăр, кашни ача несĕлне пĕлсе ÿстĕр, – терĕ ал ĕç ăсти хăйсен йăх кĕнекине ума хурса.

Ял тăрăхĕнчи тата ун тулашĕнчи чылай мероприятие хутшăнать вăл. Кашни курав валлиех çĕнĕлĕх илсе тухма тăрăшать. Унăн ĕçĕсен пысăк пахалăхне тата пултарулăхне тĕрлĕ дипломпа Хисеп грамоти çирĕплетет.

Хăш-пĕр çыннăн ăсталăхĕ чăн та вĕççĕр-хĕрсĕр иккен. Вера Титовна кирек ăçта тухас-каяс пулсан та фотоаппарат илсе çÿрет, хăш чухне пахчана та унсăр тухмасть. Çапла вара ĕмĕр асра юлмалли самант пулчĕ те. Маларах сăн ÿкерчĕксене альбомра пухса пынă, халĕ вара ăна валли компьютер меллĕ. Çавăн пекех вăл ял, шкул историйĕпе, ытти темăпа кăсăкланать. Кашни темăпа вара уйрăм кĕнеке хатĕрлет.

Çирĕм ултă çул ветеринари ĕçченĕ пулса ĕçленĕ, халĕ шкулта тăрăшакан пултаруллă хĕрарăмăн тĕрлĕ енлĕ ăсталăхне асăнтăмăр-ха. Паллах, çывăх çынсем пулăшмасан çакна пĕччен пурнăçлама йывăр. Кунта вара унăн туслă çемйи пысăк тĕрек пулса тăрать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Çыру хурав кĕтет

# Çÿп-çапа ăçта чикмелле?

Район хаçачĕ урлă çак ыйту çине хурав илес килет. Хальхи вăхăтра тасалăхпа тирпейлĕх пирки нумай калаçатпăр. Анчах та эпир акă, Муркашри Колхозная урамра пурăнакансем, ăна ăçта чикмеллине пĕлместпĕр. Паллă ĕнтĕ, полиэтилен, кантăк, кĕленче, пакет, люминесцентлă лапочкăсем тата ытти япала килти хуçалăхра пухăнмасăр май çук. Урнăсемпе ятарлă ещĕксем вырнаçтарса паман. Çавна май вĕсене кам ăçта пĕлет, çавăнта кайса пăрахать. Куç умĕнчех тавралăха варалатпăр. Ответлисем мĕн шухăшлаççĕ-ши кун пирки? Хаçат урлă ответ парсан лайăх пулнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен ку ыйту мана кăна интереслентермест.

**В. МАСТЕРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

Муркаш ялĕ.

## Редакци почтинчен

# Лагерьти пĕрремĕш кун

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕрлĕ уявпа пуян. Чи малтанах ăна Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун пулнипе пĕлетпĕр. Иккĕмĕшĕ – ачасен чи хаваслă вăхăчĕ – çуллахи каникул пуçланни. Вĕсем ăна тахçанах чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Урамра выляма пушă вăхăт нумай-çке халĕ! Виççĕмĕшĕ – шăп та лăп çак кун шкулсенче ачасен ĕçпе кану лагерĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Мĕн тери пысăк савăнăç ку пирĕншĕн. Савăнма пĕлсен кăна лайăх пурăнма пулать! Пуçăмра сăвă йĕркисем çуралчĕç:

Çитрĕ ак каникул,
Васкаса, кулса.
Урока каймастпăр,
Çÿрĕпĕр канса.

Паян ирех вырăн çинчен сиксе тăтăм та шкулалла чуптартăм. Ара мĕнле чăтса ларас-ха килте?! Çулла çитрĕ-çке, лагере каяс вăхăт пуçланчĕ! Çанталăк пĕлĕтлĕ пулин те чунра çав-çавах савăнăçлă, теме кĕтнĕн чĕре сиксе тухас пек тапать. Паян ирхине çумăр çуни манăн кăмăла пăсмарĕ.

Июнĕн 1-мĕшĕнче шкулта ачасем нумайăн пуçтарăннă. Пурте хаваслă, пĕр-пĕрне уявпа саламлаççĕ. Кĕрлет, шавлать шкул, ярмăрккăри пекех! Часах пире апата чĕнчĕç. Çакăн хыççăн пире лагерь ертÿçипе воспитательсем шкул коридорне пухса уяв программипе паллаштарчĕç. Пуçланчĕ вара тĕрлĕ вăйă-конкурс; маттур çав пирĕн воспитательсем! Уяв интереслĕ те савăнăçлă ирттĕр тесе чунтан тăрăшнă, чăн-чăн кану хатĕрленĕ. Мĕн кăна тумарăмăр пулĕ эпир кунта: юрларăмăр, ташларăмăр, ăстăн енчен вăй виçрĕмĕр. Питĕ килĕшрĕ пире паянхи уяв.

Выляса-кулса вăхăт питĕ хăвăрт иртрĕ, сисмерĕмĕр те – кăнтăрлахи апат çитрĕ. Эх, тутлă та иккен çимĕçĕ! Тавтапуç сире, Алина Юрьевна, Наталия Валериановна, Эльвира Анатольевна, паянхи уявшăн! Лагерь кунĕсене малалла та хаваслă, усăллă иртересчĕ. Ку вара пирĕнтен нумай килет.

**Виктория ТИХОНОВА,**
**Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулăн вĕренекенĕ.**

# Хăрушсăрлăх ыйтăвĕ – пĕрремĕш вырăнта

**(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.)**

**АЧАСЕН ÇУЛЛАХИ КАНĂВĔ ИНКЕКСĔР ИРТТĔР**

Ачасен çуллахи канăвне инкексĕр иртересси те ларура тĕп ыйтусенчен пĕри пулчĕ. Районти вĕрентÿ тата çамрăксен политикипе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова пĕлтернĕ тăрăх, кăçал хула çумĕнче вырнаçнă лагерьсенче 235 ача канать. Пĕрремĕш сменăна 71 ача кайнă та ĕнтĕ. Унсăр пуçне шкулсенче шкул çумĕнчи тата профильлĕ лагерьсем ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсенче татах 918 тата 1068 ача вăхăта усăллă иртерет. Пĕтĕмпе вара ачасен çуллахи канăвне йĕркелеме 4 млн. та 449 пин тенкĕ уйăрнă. Пурĕ çакă 2270 ача канăвне йĕркеленĕ çĕре каять. Ку вăл районти ачасен 62,8 процентĕн канăвне йĕркелеме май парать. Унсăр пуçне ачасене лагерьсене канма районти социаллă хÿтлĕх пайĕ урлă та, опекăпа попечительство органĕ урлă та яраççĕ. Çапла вара çуллахи канăва усăллă иртерекенсен йышĕ татах та ÿсет.

Анчах кунта ыйту сиксе тухать: çуллахи каникул тăршшĕпех ачасем çапла аслисен куçĕ умĕнче пулаççĕ-и? Зоя Юрьевна каланă тăрăх, виçĕ уйăхĕпех лагерьсене ĕçлеттерме май çук. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсемпе çитĕннисен каникулăн ытти уйăхĕсенче тимлĕхе ÿстерме тивет.

Ларура вара лагерьсене янă чухне право йĕркине пăсакан ачасен çуллахи канăвне усăллă йĕркелессине чи мала хумаллине палăртрĕç. Çавăн пекех çамрăксене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ чухне те вĕсем çинчен манса каймаççĕ. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа кăна 246 шкул ачине вăхăтлăх ĕç тупса панă.

Тĕрлĕ сиенлĕ йăласенчен сыхлассипе те районта тĕрлĕ ĕçсем туса иртереççĕ. Майăн 11-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 11-мĕшĕччен çитĕнекен ăрăва наркотик, эрех ĕçнин, пирус туртнин сиенĕ çинчен асăрхаттарассипе уйăхлăх иртнĕ.

Çапах та çакна каласа хăварас килет. Ашшĕ-амăшĕсен шкул çине кăна шанса лармалла мар. Ачасем мĕнле пурнăç суйласа илесси çемьери воспитанирен пуçланать, унтан нумай килет. Çав шутран вĕсем право йĕркине пăсассипе пăсмасси те.

**ĔÇЛЕС ТЕСЕ ĔÇЛЕМЕЛЛЕ**

Çынсем саккуна пăхăнса пурăнасси çине вырăнти профилактика канашĕсем те витĕм кÿмеççĕ мар. Ахальтен мар ĕнтĕ уйрăммăн пăхса тухрĕç ку ыйтăва ларура. Çакăн сăлтавĕ те пур. РФ Шалти ĕçсен министерствин пирĕн районти пайĕн пай пуçлăхĕ В.А. Григорьев пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра çемьере тата йăлара пулса иртекен хирĕçÿсем йышлансах кайрĕç. Ял тăрăхĕсенчи профилактика канашĕсен ĕçне пăхса тухни вара çакна кăтартса парат: вĕсем ытларах чух хут çинче çеç шутланса тăраççĕ.

– Йĕркене пăсакансене ял администрацине чĕнсе сÿтсе явнипе çеç çырлахмалла мар. Çемьесене тухса çÿремелле, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене. Ростислав Николаевич вырăнсенче халăхпа ытларах ĕçлемеллине палăртрĕ.

Çамрăксене право йĕркине пăсассинчен сирсе яма пултаракан тепĕр пулăма илер. Çак комиссин иртнĕ ларăвĕнче культура учрежденийĕсенче видеосăнав системине, полицейскисене хăвăрт чĕнмелли кнопкăна вырнаçтарма хушса хăварнăччĕ. Культура çурчĕсен ĕç вăхăтне вăрăмлатасси çакăнпа тÿрремĕн çыхăннине те палăртса хăварнăччĕ. Анчах 4–5 культура вучахĕсĕр пуçне ытлах ниçтах та вырăнтан тапранман ку ыйтупа. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен сăмахĕсем тăрăх çакăн валли Культура çурчĕсене укçине уйăрса панă. Ростислав Николаевич калашле, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ку ыйтăва контроллемеллех пулнă. Паллах, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем палăртнă пек, культура учрежденийĕсен пуçлăхĕсем «пĕчĕк ачасем» мар. Анчах та çак икĕ енĕн пĕр чăмăра пĕрлешсе ĕçлемеллине ăнланма вăхăт çитнĕ пек. Культура учрежденийĕсем пĕтĕмпех ял тăрăхĕсене куçрĕç пулсан, пĕрпĕрне ăнланса пĕр çемьери пек ĕçлессе шанас килет.

Халăх дружинникĕсен ĕçне те хут çинчен «урама» куçарма вăхăт. Виталий Алексеевич малашне вĕсене лайăх ĕçленĕшĕн хавхалантармалла пуласси çинчен асăнчĕ. Анчах палăртса хăвармалла: кашни дружинник мĕнле ĕçленине çирĕп контроллеме пуçлаççĕ. Çавăнпа та ку ыйтăва депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче çитес вăхăтра пăхса тухмаллине палăртса хăварчĕç.

**ХУШСА КАЛАНИ**

Ларура çавăн пекех районти административлă комиссин ĕçне тишкерчĕç. Унсăр пуçне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн спирт пур шĕвексене сутассипе çыхăннă Çырăвĕпе паллашрĕç.

Аса илтеретпĕр, асăннă канашăн иртнĕ ларăвĕнче районти хăш-пĕр аптекăсенче, çавăн пекех почтальонсем урлă, халăхри пек каласан, спирт пур «фунфуриксем» сутнине пăхса тухнăччĕ. Тĕрĕссипе çак спирт пур алурана сĕрмелли ытти шĕвексене ĕçсе çынсен пурнăçĕ хăрушлăха кĕрсе ÿкнине палăртнăччĕ. Çавăнпа та çак шĕвексене сутма чарассипе тивĕçлĕ йышăнусем тума ыйтса Муркаш район администрацийĕ республикăна çырупа тухрĕ. Ăна çак кунсенче пăхса тухрĕç, çак препаратсене сутассинче йĕрке тума ыйтса республика шайĕнче те çыру хатĕрлерĕç. Халĕ вара Раççей шайĕнче ку енĕпе мĕнле документ йышăнасса кĕтмелли çеç юлать. Тата çак шĕвексене сутакан харпăрлăх хуçисенче – çынлăх туйăмĕ вăранасса. Саккун чармасть тесе вĕсене сутса «укçа туни» вырăнлах мар пуль. Çав пĕчĕк кĕленчесене ял çыннисем те, хулара та этикетка çинче кăтартнă тĕллевпе мар, эрех ĕçме юратакансем мĕншĕн илнине те пурте лайăх пĕлетпĕр. Çын куççулĕ çĕре ÿкмест теççĕ вĕт.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Эпĕ çапла шухăшлатăп

# Илемлĕ те тирпейлĕ пикесем илĕртÿллĕ

Чăваш хĕрĕсене çут çанталăк кÿрентермен. Сăн-пичĕпе те, кĕлеткипе те илĕртÿллĕ вĕсем. Унсăр пуçне пикесем илемлĕ тăхăнса яшсене илĕртме тăрăшаççĕ. Анчах та çемьеленнĕ хĕрарăмсенчен ытларахăшĕ çакăн пирки манать, харпăр хăйне тирпейлеме пăрахать. "Халĕ упăшка çумра, камшăн хитреленмелле, – теççĕ пулас ун пеккисем. Арçынсем вара пурпĕрех илемлĕ те тирпейлĕ курăнакан хĕрарăмсем патнеллех туртăнаççĕ.

Хамăн çамрăклăха час-часах аса илетĕп. Чăваш халăхĕ ун чухне урине çăпата сырса çÿретчĕ. 1942 – 1943 çулсенче ялсенче тутар калушĕсем курăнма тытăнчĕç. Вĕсене çак халăх çыннисем сутса çÿренĕрен çапла каланă ахăртнех. Хĕрсем килте тĕртсе хатĕрленĕ пир-авăртан çĕленĕ кĕпесем тăхăнса çÿретчĕç. Фабрикăсенче тĕртни ялсене çитеймен.

Халĕ вара пурнăç тĕпрен улшăнчĕ. Çынсем илемлĕ тăхăнса çÿреççĕ. Тумтире тĕрлĕ материалтан çĕлеççĕ. Чылайăшĕ модăпа килĕшÿллĕн тăхăнма тăрăшать. Паллах, ялти пурнăçра мода хыççăн ĕлкĕрсе пыма çук. Унпа тан пыма ăнтăлмаллах-ши тата? Анчах та хăра хисеплеттерес тесен тумтир енчен ула курак пек курăнмалла мар. Илемсĕр хĕрарăмсем çук. Тирпейсĕррисем вара чăнласах пур. Пĕтĕм уйрăмлăхĕ çавăнта. Хĕрарăмăн яланах хитре те тирпейлĕ пулмалла, мĕншĕн тесен вăл тĕнчене юрату валли килет.

Шел те, ялти хĕрарăмсем уйрăмах час «ватăлаççĕ». Хăйсене пăхманнипе те çыхăннă ку. Этемлĕхĕн черчен çуррин таврари çынсене, уйрăмах арçынсене, килĕшес текен туйăм пулмалла. Ахальтен мар ĕнтĕ ĕлĕк ăрупа пурăннă ушкăнсенчи хĕрарăмсем те хăйсене тĕрлĕ шăкăр-макăрпа илемлетнĕ, ыра шăршăллă шĕвексемпе усă курнă, куç харшисене сăрланă.

Арçынсем пирки ку хутĕнче нимех те каламарăм. Вĕсене те пырса тивет çак сĕнÿ. Пысăк укçа ĕçлесе илекен арçынсемех епле май килнĕ çапла тăхăнса çÿренине те асăрхама тÿр килет. Хамăн юлташсене çеç мар, ыттисене те япăх тăхăнса çÿренине курас килмест манăн. Этеме тумне кура кĕтсе илеççĕ вĕтха. Апла пулсан çи-пуç та çын пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятман ял уявĕнчен хатĕрленĕ кăларăм

## «Эсир пулсан ял пурăнать-ха»

**Çапла пĕтĕмлетрĕç уявра маттур ентешĕсене хаклă парнесемпе чысланă май депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А. Иванов тата Çатракасси ял тăрăхĕн ертсе пыракан специалисчĕ В. Любимова.**

Юлашки çулсенче Ятманта ял уявĕ ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Пĕрлештерет вăл Ятмансене, пĕр ĕмĕт-тĕллевпе пурăнтарать. Уяв çывхарнă май ял çыннисем никам каламасăрах хăйсен хуçалăхĕсемпе кил умĕсене, урамсене тирпейлесе хăт кĕртеççĕ. Кунпа пĕрлех тăван ен илемлĕрех пултăр тесе татах пурнăçламалли ĕçсене палăртаççĕ. Кашниех Ятман ялĕн илемĕпе хăчĕшĕн хăйĕн яваплăхне туять.

Юлашки çулсенче ку тăрăхри пĕрлешŸллĕ хуçалăх панкрута тухнă пулин те ялсенче çĕр ĕçченĕн ĕçĕ лăпланман-ха. Ятманта пурăнакансем те ыттисенчен кая юлмасăр патшалăх пулăшăвĕпе усă курса килти хушма хуçалăха аталантараççĕ.

Çатракасси ял тăрăхĕнчен тăратнă кăтартусене пăхсан ку тăрăхри ялсенче çулталăк пуçланнă тĕле килти хушма хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăх 1573 пуç тытнă. Вăл шутран сумалли ĕнесем – 639 пуç. Килти хушма хуçалăхсенче 2 лаша, 123 сысна, 231 сурăх, 396 кролик тытни вырăнти çынсем ĕçсĕр ларманнине уççăн кăтартса парать.

Ял хуçалăх çине çĕр-шыв тимлĕх сахалтарах уйăрать тенине Ятмана тухсан пачах хирĕçле ŸкерчĕкŸ куç умне пулать. Ĕçлекен хресчен çĕр ĕçĕнчен те самаях тупăш кăларайрать иккен. Çакна Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Ятман ялĕнче пурăнакансем те хăйсен кулленхи ĕçĕпе çирĕплетеççĕ.

Килти хушма хуçалăха аталантарассипе пĕр гектара çитернĕ çĕр лаптăкĕсем ял хуçалăхĕнче вăй илме пуçланă çĕнĕлĕхсене ура çине тăратма пулăшаççĕ.

Килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх тытасси Ятмансемшĕн те иккĕмĕш вырăнта мар. Ялта паян мăйракаллă шултра выльăхсем пурĕ 124 пуç. Вăл шутран 97 пуç сумалли ĕнесем. Сыснасемпе сурăхсем 17 тата 35 пуç пулсан, ял çыннисен харпăрлăхĕнче 72 кролик тата пĕр лаша, çĕршер пуç чăхчĕппе хур-кăвакал.

Килти хушма хуçалăх хуçи выльăх-чĕрлĕх тытса тата пахча çимĕç Ÿстерсе туса илнĕ продукцие меллĕ вырнаçтарса малашлăх аталанăвĕн çулĕсене усни, çакăнтах çĕнĕлĕхсем ширани никамшăн та вăрттăнлăх мар...

Ялта та ĕçлеме, ĕçленине кура укçа тума пулать. Çакна валли рынокри лару-тăрăва пĕлсе тăни тата çанă тавăрса ĕçлени, çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илни, юнашар ĕçлекенĕн ĕçне шута хуни, шанни кирлĕ. Паян патшалăх ял хуçалăхĕ тĕлĕшпе, килти хушма хуçалăх çине тимлĕх уйăрнă вăхăтра ялта пурăнакан тĕллевĕсем те пысăкрах пулччăр, вĕсене пурнăçа кĕртме çулĕ те уçăлсах пытăр.

## «Ĕнисем хăйсем пире тăрантараççĕ»

Туслă çемье



«Чуна парса ĕçлесен, тăрăшса вăй хурсан ялта та пурнăç уттипе тан пырса пурăнма пулать»,– тесе кăмăллă куллине пытармасăр кĕтсе илчĕ мана ял кунĕнче Надьăпа Кристина мăнукĕсене уява хатĕрлекен Светлана Евлампьевна Васильева **(сăн Ÿкерчĕкре)**. Анчах çепĕç кулă хыçĕнче çын курман çулсем, çухрăмсем, тăрăшуллă ĕç, пурнăç юратăвĕ...

27 çул Çатракассинчи «Березка» ача садĕнче ĕçлесе те ял хуçалăх ĕçĕнчен уйрăлман воспитательницăн çемйи паян – Ятман ялĕнче пурăнакансемшĕн ырă тĕслĕх. Кĕçĕн çулхи ачисене тивĕçлĕ воспитани панипе пĕрлех килти хушма хуçалăх çинчен те самантлăха та манмасть хастар хĕрарăм. Пурнăç çынни, тенĕ кун пеккисем пирки вată асаттесем. Каланă та – йăнăшман.

Çак кунсенче кĕмĕл туй паллă тăвакан Светланăпа Геннадий Васильевсем – нумай ачаллă çемье никĕсĕ. Ĕçрен хăраман хĕрарăмпа арçын икĕ ывăлпа хĕр пурнăç çулĕ çине кăлараççĕ. Вĕсенчен нихăшĕ пирки те кахалнаян тенине илтме çук. Пĕрлехи вăй-халпа тата Валя кинĕпе 2 мăнукĕ хавхалантарнипе туслă çемье паян килти хушма хуçалăхра сумалли ĕнесем иккĕ, тынашкапа вăкăр, йышлă чăх-чĕп, кроликсем тытать. Çак пĕчĕк фермăран пысăк тупăш илме 4 гектар çĕре акса-сухаласа ял хуçалăх культурисем туса илеççĕ.

– Çак ĕç калăпăшне йăлтах алăпа тата çынна тара тытса пурнăçлама хакла ларать. Çавăнпа та атте иртнĕ çулсенче ЮМЗ трактор туянчĕ. Унпа паян эпир аттепе иксĕмĕр ылмашăнса ĕçлетпĕр, чылай усă куратпăр, кŸршĕ-аршăна та пулăшатпăр. Çавăнпа та пирĕн харпăрлăхри çĕр паян усăсăр выртмасть, – терĕ калаçăва хутшăнса Гриша ывăлĕ.

Кунта Светлана Евлампьевна хăйсем выльăх-чĕрлĕхшĕн ĕçленине кура вĕсем те кил хуçисене тăрантарнине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Акă Валентина кинĕ кашни эрнерех Шупашкар пасарне сĕт те, тăпăрчă та, çупа хăйма та илсе каять. «Уссине куратпăр», – пулчĕ кил хуçи хĕрарăмĕн кĕске хуравĕ.

Юратнă ĕçе канупа танлаштараççĕ вĕсем. Пирĕн паянхи тĕслĕхре те çак чăнлăха хирĕçлеймĕн.

**А. БЕЛОВ.**

Еç тата ял çынни



## Ĕмĕрĕпех хурсем усрать

Юратнă ĕçре ирттернĕ çулсенчи кашни кун, кашни сехет – хăй уйрăм пурнăç, уйрăм пуянлăх, уйрăм истори. Çавăнпа кирек ăçта та ĕç малти вырăнта пулни пурнăçăн тĕп никĕсĕ пулса тăрать.

– Хам ĕçре эпĕ ачасен е урăх çынсен пулăшăвĕ çине шанса ларман. Вĕсен тата ырă сунакан ытти çынсен пулăшăвĕсĕр те юлман. Сивĕ-и е ăшă, çумăр çăвать-и е çил-тăман вĕçтерет, е паянхилле пĕçертсе хĕвел пăхать – ĕç маншăн малти вырăнта пулнă. Çавăнпа ĕнтĕ эпĕ килти хушма хуçалăхра хурсем ĕрчетессипе туслашса кайрăм. Паян вара вĕсемсĕр хамăн пурнăçа курмастăп та, – хур чĕппписене пĕçернĕ çăмарта вакласа панă май калаçать Раиса Григорьева **(сăн Ÿкерчĕкре)**.

Ял çынни пĕр ĕçпе çеç пурăнмасть. Тĕрлĕ ĕçре вăй хунă хĕрарăм ыттисемпе пĕрлех нихăш çул та килти хушма хуçалăх пирки манман. «Çиччĕ виççе ĕçлесен çеç килти хушма хуçалăх тупăш парать», – Диана мăнукне лăпкаса илчĕ асламăшĕ.

Раиса Петровнăн килти хушма хуçалăхри ĕçĕпе кăсăклансан çакă куç умне тухрĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ ăратлă хурсем Ÿстерет тата вĕсене тулăх тăрантарассине тĕп вырна хурать. «Хур амисене хĕлĕпе урпа, çăва тухсан тулă çитеретĕп, витаминсем паратăп. Çуркунне вара вĕсем çăмарта нумай тăваççĕ те хăйсен айне хурса парайманнисене инкубаторпа кăларатăп. Иртнĕ кунсенче инкубаторпа кăларнă чĕпсене 2–3 кун çăмарта пĕçерсе парса тăрантартăм та «Солнышко» комбикорм çине куçартăм. Амăшĕпе пĕрле çырмана кайма пуçласан тулăпа тăрантарма тытăнăп. Хылчăклă пулнă пирки урпана чĕпсене пама юрамасть», – пысăк опыта туйса калаçать ял хĕрарăмĕ чĕпсем çинчен куç илмесĕр.

**А. БЕЛОВ**
**сăн Ÿкерчĕкĕ.**

Ыйту – хурав

## Чечексене шăварасси

***Килте чечексем нумай. Вĕсене пĕр пек шăвармалла мар тени тĕрĕсех-и?***

**Т. ТИПОВА.**

Чечек пурри кил-çурта хăт кĕртет. Çавăнпа та кил хуçи арăмĕсем чечексемпе туслашнине ырлатăп. Лайăх аталаннă, пысăк савăтра Ÿсекен чечеке эрнере пĕрре, пĕчĕк савăтра Ÿсекеннине куллен шăварсан лайăхрах. ПŸлĕмре мĕн чухлĕ ăшăрах, чечеке çавăн чухлĕ час-час шăвармалла. Çуркуннепе çуллахи вăхăтра чечексене нумайшарăн шăварма сĕнеççĕ, хĕлле вара сулхăнрах пулнине шута илсе сайрарах шăварас пулать.

Чечексемшĕн çумăр, юр шывĕ питĕ усăллă. Çакна пĕлсе çулла çумăр шывĕ пухассипе тăрăшни ытлашши пулмасть. Çавăн пекех «типĕлле шăвармалли» меслет те пур: чŸлмекри тăпрана пĕрмаях кăпкалатса тăмалла.

**К. СТЕПАНОВ.**

Уйăх календарĕ

## Çĕр çырли пиçет

Çĕртме уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле çĕр çырли пиççе çитет. Пахчара çак уйăхра çĕр улми речĕсене купаласси – тĕп вырăнта. Çак ĕçе 2–3 хут пурнăçлани аван тухăç илме пулăшать. Калчасене шăварсах тăмалла, апатлантармалла.

**Çĕртме уйăхĕн 9–12-мĕшĕсем.** Пахча çимĕç культурисене шăвармалла тата органикăллă удобренипе апатлантармалла. Шăтман культурăсене тепĕр хут акмалла.

**Çĕртме уйăхĕн 12–14-мĕшĕсем.** Ÿсен-тăрана Ÿсме пулăшакан стимуляторсемпе пĕрĕхмелле. Томатсене, пăрăçа, кабачоксемпе патиссонсене, купăстана апатлантармалла. Калчасене сайралатмалла.

**Çĕртме уйăхĕн 14–17-мĕшĕсем.** Пахча çимĕçе шăвармалла тата кишĕре, кăшманпа çарăка органикăллă удобренипе апатлантармалла. Компост хатĕрлемелле.

**Çĕртме уйăхĕн 17–18-мĕшĕсем.** Çум курăкран иртмелле. Пахча çимĕçĕн сарăхнă çулçисене пуçтарса илмелле.

**Çĕртме уйăхĕн 18–21-мĕшĕсем.** Нимех те акма-лартма, куçарса лартма юрамасть. Хуçалăх ĕçĕсене пурнăçламалла. Компост хатĕрлемелле.

**Çĕртме уйăхĕн 21–22-мĕшĕсем.** Ăшă юратакан культурăсене шăварма тата апатлантарма меллĕ вăхăт. Ÿсен-тăрана Ÿсме пулăшакан стимуляторпа пĕрĕхмелле.

**Çĕртме уйăхĕн 22–24-мĕшĕсем.** Шăварма та, апатлантарма та тăхтăр. Сăтăрçăсемпе тата чир-чĕрпе кĕрешмелле.

**Çĕртме уйăхĕн 24–26-мĕшĕсем**. Удобрени хывма юрамасть. Çĕре кăпкалатма тата çум курăкне иртме, шăварма лайăх вăхăт.

**Çĕртме уйăхĕн 26–29-мĕшĕсем.** Кĕркунне çиме шпинат акмалла.

**Çĕртме уйăхĕн 29–30-мĕшĕсем.** Пахча çимĕç культурисене шăвармалла тата органикăллă удобренипе апатлантармалла. Çырласем пуçтармалла.

## Кашни ача – савăнăç

Нумай ачаллă çамрăк çемьесем



***Ятмансем хăйсен ял савăнăçĕнче пĕлтĕрхи уявранпа ялта çуралнă кашни ачана, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе аслашшĕ-асламăшĕсене ăшшăн саламларĕç, тав туса халăх умĕнче парнесем пачĕç. Çулталăк хушшинче ялти 5 çемьере 6 ача çурални ял йывăрлăхсене пăхмасăрах ыранхи кунпа пурăннине çирĕплетет. Эсир сăн Ÿкерчĕкре куракан Галина Геннадьевна Захарова кăçалхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йĕкĕреш (Дашăпа Маша) çуратнă хыççăн 3 ача амăшĕ пулса тăнă.***

***– Татах йыш хушмалла пултăр! – терĕç вĕсене ырă сунса савăнăçлă ял çыннисемпе уяв ертŸçисем клуб сцени çинче парне панă вăхăтра.***

